Георгий Ефимов

**Чăваш çĕршывĕ**

Чăваш çĕршывĕ
Маншăн чиркӳ евĕр, –
Алтарь умне пуç тайнăн туйăнать.
Хăватлă хорăн кăмăллă кĕрлевĕ
Уçса ярать
Куллен кунах
Чуна.
Чăваш çĕршывĕ
Тунсăха мантарĕ,
Вăрманĕ, хирĕ ĕç умне чĕнсе,
Юлхавлăха сирсе,
Тар кăларттарĕ,
Ăша вăл çĕнетсе,
Чиперлетсе.

Чăваш çĕршывĕ
Маншăн çывăх кĕлĕ, –
Чун тасалать,
Чун уçăлать.
Ун умĕнче эп çăвĕн-хĕлĕн
Туптатăп хамăн кăмăла.

Чăваш çĕршывĕ
Çурхи кун пек ырă,
Çураçнă хĕрĕн тумĕ ун, шап-шур.
Унра эп юрату та телей шырăп,
Унра элчелĕмпе кун-çулăм пур.

Чăваш çĕршывĕ
Кĕрхи кун пек тулăх.
Ăнманнине
Вĕренĕп ăнтарма.
Унпа эп ĕмĕр-ĕмĕр
Туслă пулăп,
Парнелĕп сăввăма, пурнăçăма.

Чăваш çĕршывĕ
Раснă-лартнă Улăп,
Вăл халăхшăн,
Вăл хăйшĕн те тăрать.

Хĕн чух,
Лайăх чухне те унпа юлăп, –
Унра
Эп хам пуласлăха курап.

Чăваш çĕршывĕ
Эпир пуртан
Хастарлă сывă.
Вăл пурăнсан,
Эпир те чĕрĕ,
ĕмĕтленни
Кил-çуртсене те кĕрĕ!

*Ефимов, Г. Чăваш çĕршывĕ : [сăвă] / Г. Ефимов // Тăван Атăл. – 1995. – № 6. – С. 14.*